Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

85 (8151) № * Юн кун, 2013 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 13-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕçре пултаруллисем

***Сăн ӳкерчĕкре Маргарита Замятинăна куратăр. Вăл «Моргаушский» сĕт-çу заводĕнчи производство цехĕнче аппаратчик пулса ĕçлет.***

***– Энĕ çакăнта вăй хума пуçланăранпа вăтăр çул ĕнтĕ. Ĕç ĕмĕрне çак организаципе çыхăнтарнăшăн пачах та ӳкĕнместĕп, – каласа парать Маргарита Мефодьевна хăй суйлавĕпе кăмăллă пулнăран.***

***Ĕçлекен çынна сума суни вара сăваплă, тепĕр чухне ăшă сăмах та чуна çемçетет вĕт. Акă тăрăшуллă Маргарита Мефодьевна пултарулăхне тĕрлĕ çитĕнӳ çирĕплетет. Çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен уявĕнче ăна Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине парса чысларĕç. Ăна çак ятпа саламлар, малашне татах та ӳсĕмлĕрех вăй хума ăнăçу сунар.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Тыр-пул уявĕнчен



## Пулăшу тĕсĕсем йышлăрах, ансатрах

Видеоконференци

**РФ Правительствин пурнăç шайне лайăхлатас тата предпринимательство ĕçне-хĕлне йĕркелесе пыма условисем туса парас тĕлĕшпе информаци технологийĕсемпе усă курас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвĕ иртнĕ. Ăна видеорежим мелĕпе Раççей Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев ирттернĕ. Видеоконференци ĕçне Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.**

РФ çыхăну тата массăллă коммуникацисен министрĕ Николай Никифоров пĕлтернĕ тăрăх 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çынсене патшалăх услугисемпе тивĕçтерекен чиновниксем кирлĕ документсене хайсем пуçтарма тивĕç. Çав тĕллевпе ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕн системипе (СМЭВ) усă курмалла. Ку шута халăх хăйĕн çумĕнче пулмалли документсем кăна кĕмеççĕ (паспорт, водитель удостоверенийĕ т. ыт. те). Кунсăр пуçне граждансем услугăсене патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕпе (www.gosuslugi.ru) усă курса электрон мелĕпе хăйсем тĕллĕн те илме пултараççĕ.

Чăваш Енре çак вăхăта патшалăхăн тата муниципалитетăн 69 услугине электрон мелĕ çине куçарнă. Республика Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче çак вăхăта республикăра пурăнакан 36,5 пин çын регистрациленнĕ. Тепĕр майлă каласан çынсен 3 проценчĕ услугăсене чиновниксем патне çӳремесĕрех электрон мелĕпе илме кăмăл тăватъ.

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Михаил Игнатьев чиновниксем ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕн системипе усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен каланă. «Çакă çынсене патшалăх услугисемпе тивĕçтернĕ чухне меллĕ условисем туса парать кăна мар, информаци технологийĕсене аталантарма хывнă бюджет укçи-тенкипе эффективлă усă курма та май парать», – палăртнă республика Пуçлăхĕ.

Республикăра

## Ачасем тимлĕхе тивĕç

Ачасене право пулăшăвĕ памалли пĕтĕм тĕнчери кун Чăваш Енре ноябрĕн 20-мĕшĕнче иртет. Çакна май ачасем тата вĕсен ашшĕ-амăшĕ валли ятарлă лекцисемпе семинарсем ирттерме палăртнă. Вĕсем ачасен прависемпе ирĕкĕсене, интересĕсене хӳтĕлессипе тата ытти çивĕч ыйтупа пулĕç. Мероприятисене шкулсенче, ача сачĕсенче тата ача-пăча çурчĕсенче ирттерме планласа хунă ĕнтĕ.

Аса илтеретпĕр, ачасене право пулăшăвĕ памалли пĕтĕм тĕнчери куна Правительство комиссийĕ йышăннă. Çак кун федерацин «О бесплатной юридической помощи в Российской Федерации» саккунĕпе килĕшӳллĕн иртет.

Чăваш Енĕн Юстици министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх Чăваш Республикин адвокатсен палати республикăри 283 адвоката тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерме полномочи панă.

Çак тӳлевсĕр пулăшупа сахал тупăшлисен, 1 тата 2 ушкăн инваличĕсен, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсен тата ытти хăш-пĕр категорие кĕрекен граждансен усă курма пулать. Кунсăр пуçне инвалид ачасем тата тăлăха юлнă ачасем, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнисем, ирĕкрен хăтарнă е профилактика учрежденийĕсенчи çул çитмен граждансем тата ытти хăш-пĕр çамрăк граждансем те çак пулăшăва тивĕçеççĕ.

Çĕнĕ ача сачĕ

## Пĕчĕккисем валли – парне

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕçлĕ çул çӳревпе Комсомольски районĕнче пулнă. Комсомольски ялĕнче вăл савăнăçлă лару-тăрура муниципалитетăн хушма вĕрентĕвĕн «Комсомольскинчи 3-мĕш номерлĕ «Радуга» ача сачĕ» бюджет учрежденине уçнă çĕре хутшăннă.

Паянхи кун ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ача сачĕ 145 вырăнлă. Ăна «Чăваш Республикинче 2011 – 2020 çулсенче шкулччен вĕренĕве аталантарасси» подпрограммăна пурнăçа кĕртнĕ май хута яма пултарнă. Объекта ĕçе кĕртме бюджетран 86 млн. тенкĕне яхăн уйăрнă. Çапла майпа районта 3 çул тултарнă ачасене ача сачĕсенче вырăнсемпе тивĕçтерессин ыйтăвне татса панă.

Çĕнĕ ача сачĕ хăйĕн алăкĕсене уçнă ятпа ял çыннисене саламланă май республика Пуçлăхĕ ку вăл кăçал Чăваш Енре хута янă пиллĕкмĕш ача сачĕ пулнине палăртнă. Çулталăк вĕçлениччен вара шкул çулне çитменнисен татах 6 учрежденийĕ ĕçе кĕмелле.

Социаллă çĕнĕ объект хута кайнă ятпа пухăннисене Чăваш Ен вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Петр Краснов, Патшалăх Канашĕн депутачĕ Кияметдин Мифтахутдинов тата ыттисем саламланă.

Хыççăн Михаил Васильевич Ял хуçалăх тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне халалласа ирттерекен уяв мероприятине хутшăннă.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## 1043 çынна тивĕçтернĕ

Ĕç çынна илем кӳрет теççĕ. Анчах паянхи пурнăçра ĕççĕр юласси те пулать. Кун пек чухне вара чылайăшĕ пулăшу ыйтса районти ĕçпе тивĕçтерекен центра пырать.

2013 çул пуçланнăранпа районти ĕçпе тивĕçтерекен центра ĕç шыраса 1156 çын пынă. Чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне вĕсенчен 62-шне ĕççĕррисен шутне тăратнă. Ку вăл районти ĕçлеме пултаракан çынсен 0,31 проценчĕ. Çав вăхтрах ĕç паракансем хăйсем патĕнче 158 ваканси пурри пирки пĕлтереççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă 1043 çынна яланлăх тата вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтернĕ.

## «Музейри каç»

Чӳк уйăхĕн малтанхи кунĕсем тури чăвашсен музейне хăйне евĕрлĕх илсе кĕчĕç. Тĕлĕнтермĕш атмосфера, хăнăхман мастер-классем, тури чăвашсен йăла-йĕрке традицийĕ тата ытти те «Музейри каç» мероприятие пынисене уйрăм тĕнчене илсе кĕчĕç. Çак каç чăн-чăн искусствăшăн çунакансене пĕр йыша пухрĕ. Тĕрлĕ енлĕ программа кашнин валлиех хăй юратнă ене уçса пачĕ. Халăх йăли-йĕркипе пуян каç М. Димитриев художникăн «Тăван ен илемĕсем» картинăсен выставкине уçнинчен пуçланчĕ. Уява пынисемпе ирттерне тĕл пулура Марс Михайлович хăй художник пуласси ăçтан пуçланнине, мĕн енпе ытларах ĕçлеме юратнипе, вăл е ку ĕçе пурнăçланă чух епле йывăрлăхсем пуррипе тата вĕсене çĕнме мĕн пулăшнипе паллаштарчĕ.

«Музейри каçа» хутшăннисем пир çинче ӳкерчĕксем тăвассипе, сывă апат-çимĕçпе пурнăçа тăсассипе, алă ĕç ăстисен пултарулăхĕпе, эмел курăкĕсемпе епле усă курмаллипе т. ыт. те паллашрĕç.

## Ватăлман кĕнекесем

Лайăх кĕнекен кивелме вăхăт çук: кун-çул иртнĕçемĕн хăйсемех çĕнелеççĕ, çамрăкланаççĕ, пурнăç утăмĕпе тан пыма çĕнĕ вăй илеççĕ.

Чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнчен тытăнса Ильинкăри ял библиотекинче кăçалхи юбиляр-кĕнекесен ятарлă выставки ĕçлеме пуçланă. Ку кĕнекесем – нихăçан кивелмен тата хăйсен вулаçисене çухатман паттăрсем. С. Аксаковăн «Аленький цветочек» – 155 çулта, А. Беляевăн «Человек-амфибия» – 85 çулта, Ж. Вернăн «Дети капитана Гранта» – 145 çулта, М. Горькийăн «Сказки об Италии» – 100 çулта т. ыт. те.

Хăшĕ аса килчĕ – вуласа пăхăр. Ӳкĕнмелле пулмĕ. Çĕнни, вĕренмелли вара унта паян та чылай!

## Алăка хупса çӳрĕр

Районти патшалăх пушар надзорĕ пĕлтернĕ тăрăх паянхи куна район территорийĕнче 30 пушар регистрациленĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 9 тĕслĕх сахалрах. Иртнĕ çул ирĕке кайнă вут-çулăмра 7 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнăччĕ пулсан, кăçал кунашкал инкексем 2 пулнă. Кун пек юлашки тĕслĕх нумаях пулмасть Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Турикасра П. гражданинăн килĕнче пулса иртнĕ. Ку ĕçпе тĕпчев вĕсленмен пулсан та, малтанлăха палăртнă тăрăх пушар сăлтавĕ – кил хуçи вырăн çинче ӳсĕрле пирус туртни. Хĕл кунĕсем çывхарнă май район çыннисемшĕн ку питех те çивĕч асăрхаттару.

Тепĕр асăрханулăх – алăксене хупса çӳресси. Чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Катăкуй ялĕнчи Г. хуçалăхĕн уйрăм ларакан сарайĕнче çулăм тухнă. Инкеке çийĕнчех асăрханипе «хĕрлĕ автана» нумай сăтăр кӳме паман. Пĕтĕмлетӳ: сарайне электричество çути кĕртмен тата вăл çĕнĕ çĕрте ытти хуралтăсенчен уйрăм пулнă. Кил хуçисем типĕ утă упранакан сарай алăкне питĕрсе çӳременрен унта кĕнĕ пăлă мар çын усă çулăмпа асăрханусăр пулма пултарни пушар сăлтавне çаврăнни пирки систерет.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

## Граждансене йышăнать

**2013 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче 11 сехетрен тытăнса 13 сехетчен Муркаш район прокуратурин çуртĕнче (Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт) граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе Раççей Федерацийĕн Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн ертӳçи, юстицин генерал-майорĕ А.П. Мигушов йышăнать.**

# «Тăрăшасчĕ, халăха пулăшасчĕ»

Юбилей



Тойкилтĕри сакăр çул вĕренмелли шкулта пуçламăш классене вĕрентекен тата музыка урокĕсене ертсе пыракан амăшĕ больницăна кайса килтĕм, пулăшрĕç тенине Владислав Григорьевич ача чухнех лайăх ас туса юлнă.

Йывăр вăхăтра çынна пулăшма пултаракан шурă халатлă ĕçченсем пархатарлă ĕç пурнăçланине 7 класа çитсен вăл ытларах курать. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен тĕрлĕ орден-медальпе кăна мар, ÿпкери снаряд ванчăкĕпе те таврăннă ашшĕне медиксен пулăшăвĕ кирлĕ пулать.

– Хальхи пек астăватăп, лаша йĕвенĕпе аппаланса ларакан атте ÿсĕрме, юнлă сурма пуçларĕ. Ÿпкери ванчăк тапраннă пулнă. Пирĕн тăрăхри фельдшер Василий Яников çак асапа вăхăтлăх чарчĕ те, аттене лашапа больницăна ăсатрăмăр. Пĕр вĕçĕм тухса тăракан юна чарма пултарни маншăн асамлă ĕç евĕр туйăнчĕ. Аттене ун чух сайра-хутра тăвакан операци турĕç. Çапла вара маларах врач пулма ĕмĕтленнĕскер, аттене çăлса хăварнă хыççăн хирург пулап тесех шутларăм, – ачалăхри ÿкерчĕксем тарăн йĕр хăварнăран Гиппократ тупине тунă та ĕнтĕ паянхи кун Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕнче тăрăшакан Владислав Данилов.

8 класс пĕтернĕ хыççăн амăшĕ сĕннипе Владислав Мăн Токшикран Муркашри вăтам шкула çÿреме тытăнать. Вăтам шкул хыççăн медицина пĕлĕвне илесси тÿрех пулмасть. Вĕренме кĕме балсем çитейменрен «Чувашкабеле» слесарь пулса ĕçлеме вырнаçать. Тепĕр çул та медицина факультечĕн студенчĕ пулма май килмест, çамрăк каччă РТИ заводне кĕпе-йĕм çумалли машинăсем туса кăларакан конвеер çине ĕçлеме вырнаçать.

Çапла рабочи пурнăçĕн тути-масине лайăх пĕлме ĕлкĕрнĕскере 1972 çулта Совет çарне ăсатаççĕ. Çарта та Владислава шăпа врач пулас ĕмĕте пăрахтармасть. Киле кайиччен çур çул юлсан çара призывпа пединститут пĕтернисем килеççĕ. Çавсем пулăшнипе, хăй çирĕп тĕллевлĕ пулнипе те, паллах, салтак вĕренме кĕме хатĕрленет.

Çартан таврăнсан çамрăк лейтенант медицина факультетне вĕренме кĕме чăн та балсем çителĕклех пухать. Пурнăçри тĕллев кунран-кун çывăхарах пулнине курса вăл ытларах тăрăшать. Шăпа вара парне те хатĕрлет. Виççĕмĕш курс пĕтерсен Владислав хăйĕнпе пĕр ушкăнрах вĕреннĕ Ираида Прокопьевăпа çемье çавăрать.

– Пĕрлешнĕ хыççăн тата лайăхрах вĕренме тытăнтăмăр. Гриша ывăл çуралсан та мăшăрăн академи отпускĕ илме тивмерĕ. Манăн Эльза аппа питĕ пулăшрĕ, хамăрăн атте-аннесем те пулăшсах тăчĕç ун чух. 5–6 курссенчех нумай операцие хутшăнтăм. Вĕренÿпе пĕрлех ĕçлеме те вырнаçрăм – çемье çавăртăн пулсан арçыннăн тăрантармалла. Çапла вара психиатри больницинче пĕр çул санитарта, тепĕр çул медбратра тăрăшрăм. Стройкăра хурала та вырнаçрăм, – çамрăк чухнех нимĕнле ĕçрен те хăраса тăманни палăрать Владислав Григорьевичăн аса илĕвĕнче.

1981 çул. Икĕ çамрăк врач, Ираидăпа Владислав Даниловсем, ытти хуласене кайма май пуррине пăхмасăрах Муркашра тĕпленеççĕ. Август уйăхĕнче Муркашри тĕп больницăра пĕри терапевтра, тепри хирургра вăй хума тытăнать.

– 1982 çулта больницăн çĕнĕ çуртне куçрăмăр. Вăл вăхăтра хирургсен бригади талăкĕпех дежурствăра тăрас йĕрке пулман. Çавăнпа та тĕп врача систермесĕр килтен аякка тухса кайма пултарайман эпир. Çĕрле те чĕнсе илме пултараççĕ-çке-ха. Хамăр тивĕçе яланах чыслăн пурнăçланă. Пирĕнтен малтарах ĕçлеме пуçланă Г. Огурцов тата Л. Андреев хирургсене, Мăн Сĕнтĕр больницинчи К. Степанов хирурга тав сăмахĕ калатăп – нумай вĕрентĕм вĕсенчен. Пире, çамрăксене, чылай пулăшнă вĕсем.

Çамрăк специалист хастарлăхне район больницинче тÿрех асăрхаççĕ, çавăнпах коллективăн профсоюз ертÿçи пулма шанаççĕ те. Çак вăхăтра Владислав Григорьевич ĕçтешĕсемпе пĕрле районăн кашни кĕтеснех тухса çÿренĕ, специалистсем кашни хăйĕн специализацине кура халăхпа час-часах тĕл пулса калаçнă, концертсем те лартнă. Сăмах май Владислав Григорьевич хăй те юрлама юратнă. Ĕç хыççăн спорт ăмăртăвĕсене те сиктермен. Тĕл пулусенчен часах таврăнма май килмен паллах, анчах та тепĕр кунне ирех ĕçе васканă. Çемьере вара тепĕр телей – Марина çуралать...

1990 çулта ЧР Аслă Канашĕн 12 созывĕн депутачĕсене суйлама пĕрремĕш хут демократи сасăлавĕ иртет. В. Данилов кандидата халăх шанать – вăл пĕрремĕш тапхăртах суйланать. Депутат пуласси çине çемье йĕркелĕхĕпе мăшăрĕн пулăшăвĕ те ырă витĕм кÿнех ĕнтĕ.

Сывлăх сыхлавĕпе экологи комитетне ертсе пыма сĕнеççĕ ăна, анчах та хирург ĕçне пăрахасшăн пулманран врач сĕнÿпе килĕшмест. Комитетра ĕçлесе вара пĕлтерĕшлĕ чылай ыйту татса пама пулăшать.

Çав вăхăтра шăпах республика символĕсене, чĕлхе саккунне йышăннă. Канашăн тытăмĕ питĕ вăйлине, депутатсен корпусĕ хастаррине калать В. Данилов.

Больницăра та пурнăç вĕрет, çĕнĕ хирургсем С. Васильевпа Ю. Кузнецов ĕçлеме килеççĕ.

1998 çулта Муркаш халăхĕ В. Данилова Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн 2 созывне депутата суйлать. Ку общеставăлла ĕç хирурга чăрмав кÿмест. Пĕлнĕ ĕç, халăхпа та час-часах тĕл пулнăран унăн ыратăвĕсене пĕлет вăл. Шăпах перестройка вăхăчĕ, çăмăл килмен ун чухне. Ĕç укçине те вăхăтра памаççĕ, митингсене те çитсе халăхпа калаçмалла.

Больницăра выртмалла пулсан вăл вăхăтра çынсем харпăр хăйĕн вырăн хатĕрĕсемпе, эмел-бинчĕпе, чашăк-тирĕкĕпе килетчĕç. Çакна пăрахăçлас тесе комитет чылай тăрăшнă. Созыв хăйĕн ĕçне вĕçличчен лару-тăру лайăх енне улшăнма пуçланă.

Çак вăхăтра квалификаци шайне ÿстерес тĕллевпе Шупашкарта та, Ленинградра та вĕреннĕскер пĕрре мар пулать. Больницăра вара чирлисене сыватасси, операцисем, дежурствăсем...

Тивĕçлĕ ĕçлении кура ĕнтĕ Владислав Григорьевича 2002 çулта Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ пулма шанаççĕ. Кунтах çуралса ÿснĕ çыннăн вара тивĕçе йĕркеллĕ пурнăçламалла, алран кайтăр тесе ĕçлеме юрамасть.

Пĕр-икĕ çул хушшинче больница сипленме килекен çынсем харпăр хăйĕн эмелĕпе, ытти хатĕрпе килессинчен пăрнать. Коллектив туслă ĕçлесе пырать. В. Данилов ертсе пыракан больница тытăмĕнчи ФАП-семпе пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсем республикăра малтисен ретне тăраççĕ: Нискассинчи офис (В. Басяев врач), Ярапайкассинчи офис (В. Любимова, И. Силова врачсем), Шетмĕпуçĕнчи офис (Э. Петрова врач), Сыпайри, Кашмашри, Ахманери ФАП-сем тата ыттисем те.

– 2009 çулта Муркашри тĕп больница «Республикăри чи лайăх больница» ята тивĕçрĕ. Çак ÿсĕм – пирĕн пысăк коллектив тăрăшулăхĕ, хастарлăхĕ, – тет Владислав Григорьевич ĕçтешĕсем пĕр-пĕрне ялан ăнланса вăй хунине палăртса.

Хăй хастарлăхĕ пирки вара тĕп врач сăпайлăн кăна тĕрлĕ награда пур тесе калать, анчах та ЧР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамоти, ЧР Патшалăх Канашĕн Хисеп грамоти, РФ Сывлăх сыхлав министерствин Тав çырăвĕ тата ытти наградăсем унăн ĕçĕ курăмлă пулнинех çирĕплетеççĕ пулĕ. 2006 çулта вара Владислав Григорьевич Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ ята тивĕçет.

Обществăлла пурнăçа активлă хутшăнакан врача 2006 çулта ЧР Патшалăх Канашĕн 4 созывĕн депутачĕ пулма суйлаççĕ. Ку хутĕнче – Элĕк районĕнпе пĕрле. Депутат халăха тĕрлĕ ыйтусем татса пама май пур таран пулăшать.

***В. Данилов:***

***«Кĕçех Муркашри тĕп больницăна йĕркеленĕренне 80 çул çитнине паллă тăватпăр. Кунта ĕçленĕ тата халĕ ĕçлекен специалистсене, тĕрлĕ тапхăрта больницăна ертсе пынисене – пурне те ноябрĕн 15-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртне уяв касне йыхравлатпăр. Уявра юлашки икĕ çулта больницăна «Земский доктор» программăпа килĕшÿллĕн ĕçлеме килнĕ 17 çамрăк врача та чысласа профессие йышăнатпăр».***

(Вĕçĕ çитес номерте).

Юридици пулăшăвĕ – тÿлевсĕр

# Ытларах çын тивĕçме пултарĕ

**Иртнĕ çулхи çуркунне ытти регионсем хушшинче чи малтисенчен пĕри Чăваш Енĕн çынсене юридици пулăшăвĕпе тÿлевсĕр тивĕçтересси пирки хăйĕн саккунне йышăнчĕç.**

Кун пек пулăшăва саккунпа килĕшÿллĕн пĕчĕк тупăшлă çынсем, инвалидсем, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем тата граждансен ытти категорийĕсем тивĕçме тытăнчĕç. Халĕ вара ку категорие кĕрекен çынсен йышĕ республикăра татах 35 пин çынна яхăн ÿсрĕ.

Чăваш Ен юстици министрĕ Надежда Прокопьева пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Ен Пуçлăхĕ октябрĕн 21-мĕшĕнче республикăра право пулăшăвĕпе тÿлевсĕр тивĕçтерессин йĕркине улшăнусем кĕртесси пирки калакан саккуна алă пуснă. Вăл ноябрĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕчĕ. Çапла вара халĕ тÿлевсĕр пулăшупа Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсем, çапăçусене хутшăннă ветерансем, политика репрессийĕсене пула шар курнисем шутне кĕртнисем те усă курма пултараççĕ. Вĕсен шутнех нумай ачаллă çемьесене, ача усрава илнисене, ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр юлнă ачана çемьене йышăнма шухăшлисене те кĕртнĕ. 18 – 23 çулсенчи тăлăх ачасем тата ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр юлнă ачасем хăйсем те тÿлевсĕр пулăшупа усă курма пултараççĕ. Шăпах çак вăхăтра ĕнтĕ вĕсене пулăшу кирлĕ.

Министр çавна та палăртать. Пулăшу мелĕ асăннă граждансемшĕн кăна тÿлевсĕр. Адвокатсене ĕçшĕн тÿлесси тата вĕсен тăкакĕсене компенсацилесси республика бюджечĕ шучĕпе пулĕ. Сăмахран кăçалхи тăхăр уйăхра ку тĕллевпе пĕр миллион тенкĕне яхăн куçарса панă та ĕнтĕ.

Практика çавна кăтартса парать. Ытларах чухне çынсем юристсем патне çурт-йĕр, пенси ыйтăвĕсемпе пыраççĕ. Кунпа пĕрлех медицинăпа социаллă экспертиза тата инвалидсене реабилитацилессин, тавар туянакансен прависене хÿтĕлессин ыйтăвĕсемпе пыракансем те пур.

Надежда Прокопьева право ыйтăвĕсемпе тивĕçтерекен услугăсен хакĕ кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче тăрук ÿссе кайни пирки те чăрăнса тăчĕ. Кун пирки калаçу республика Пуçлăхĕ эрнесерен ирттерекен канашлура та пулнă. Министр ăнлантарса панă тăрăх ку вăл шутлавăн хăйне евĕрлĕхĕпе те çыхăннă. Иртнĕ çул, сăмахран, статистиксем чи анлă сарăлнă право услугин – халал хутне нотариус кантурĕнче çирĕплетессин хакне кăна шута илнĕ. Кăçалхи сентябрь уйăхĕнче нотариус палати асăннă тÿлеве 1000 тенкĕрен 1200 тенкĕне çитернĕ, услуга хакĕ 20 процент ÿснĕ. Ытти хăйне евĕрлĕхсем те пур. Октябрĕн 22-мĕшĕнче асăннă ыйтусемпе ĕçлекен ведомствăсен пĕрлехи канашлăвĕ иртнĕ. Унта малашне юридици услугисен хакĕсен динамикине çутатмалли рекомендацисем туса хатĕрленĕ.

**Григорий ПЕТРОВ.**

Çĕнĕ портал

# Сĕнÿ пур-и? Тархасшăн

**Чăваш Енре пурăнакансен малашне регион законодательствине лайăхлатас ĕçе тÿрремĕнех хутшăнма май пур. «Раççей общество пуçарăвĕ» çĕнĕ портал йĕркелени çапла тума май парать.**

Çак Интернет-ресурса Раççей Президенчĕн Указĕпе килĕшÿллĕн 2013 çулхи апрель уйăхĕнче туса хунă. Çавăнтанпа кăмăл пуррисем пурте çĕршывăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе çыхăннă сĕнĕвĕсене сайта вырнаçтарма, унсăр пуçне маларах тăратнă пуçарусене ырлама пултараççĕ. Ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара федераци шайĕнчи çеç мар, регион влаçĕсем валли те сĕнÿсем тăратма май тупăннă. Ку утăма тăвас тесен малтан патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕнче регистрациленмелле.

«Раççей общество пуçарăвĕ» порталта ку е вăл пуçару тĕлĕшпе сасăлав çулталăка пырать. Сĕнĕве влаç органĕсем пăхса тухчăр тесен унăшăн мĕн чухлĕ çын сасăлани кирлĕ. Федераци шайĕнчи пуçарушăн 100 пин сасă пухмалла, регион тата муниципалитет шайĕнче ку вăл çынсен пĕтĕм хисепĕн 5 процентĕпе танлашать. Хыççăн асăннă пуçарăва эксперт ушкăнĕ пăхса тухать те ăна пурнăçа кĕртессипе йышăну тăвать.

Чăваш Енре регион шайĕнчи эксперт ĕç ушкăнне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе 2013 çулхи августăн 5-мĕшĕнче туса хунă. Унăн йышне влаç органĕсен представителĕсене, республика Патшалăх Канашĕн депутачĕсене, Общество Палатин, патшалăх учрежденийĕсен, бизнес обществисемпе общество пĕрлешĕвĕсен представителĕсене кĕртнĕ.

Ноябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне порталта общество пуçарăвĕсене 2550 вырнаçтарнă. Вĕсем хушшинче чи анлă сарăлнисем – ятарлă сигнал вырнаçтарнă автомашинăсене (оперативлă служба автотранспорчĕсĕр пуçне) çул çинче пĕр чăрмавсăр çÿреме чарасси (81,7 пин сасă), çынна хăйне хăй хÿтĕлесе тунă преступленишĕн айăплас марри (80,6 пин сасă), çул-йĕр правилисене пăсакансем тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарма видеоçырăвпа усă курма май туса парасси (66,3 пин сасă).

Чăваш Енре пурăнакансенчен хальлĕхе 1 сĕнÿ пулнă – Шупашкар шыв хранилищин шайне проектпа пăхнă 68 метр виçене çитересси. Ку сĕнÿшĕн хальлĕхе 8 çын сасăлама кăмăл тунă.

**Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви.**

Районти çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен уявĕнчен

# Чыс та мухтав сире



Çулсеренех çанталăк çĕр ĕçченне çирĕп тĕрĕслет, черетлĕ тапхăр та унсăр иртмерĕ. Уяр кун сайра-хутра кăна пулнипе кăмăлĕ те хуçăлчĕ тепĕр чух. Апла пулин те ял çынни йĕпесапине, тĕрлĕ йывăрлăхне пăхмасăр май пур таран тăрăшрĕ. Çавăнпа та чыс та мухтав çĕр ĕçченне, ял хуçалăхĕнче тимлекене!

Уяв вара чыславпа, ырă сămахпа, хăна-вĕрлепе, юрă-кĕвĕпе тата тутлă ĕçме-çимепе хăтлă. Çаксем йăлтах пулчĕç асăннă кун, кичемлĕх валли вырăн пулмарĕ уявра. Савăнăçлă саманта çăкăр ӳстерекене чыслакан юрă-кĕвĕ композицийĕ уçрĕ.

Патшалăх тимлĕхĕпе, çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхĕпе ял хуçалăх предприятийĕсем пысăк кăтартусем тума пултарчĕç. Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕпе экономикăн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ Владислав Ананьев тунă доклад та çирĕплетрĕ.

– Сирте ĕçлес кăмăл пысăк пулнине, эсир çĕр ĕçĕшĕн çуннине, çавна май тăван хуçалăхпа район экономикине пуянлатассишĕн ырми-канми тăрăшнине аван куратпăр. Мĕн пурнăçлани чăннипех те сăваплă, умра вара пире ытти ĕç кĕтет, – терĕ Владислав Кириллович уява пуханнисене саламланă май.

Ял хуçалăх ĕçченĕшĕн кирек епле тапхăр та ответлă, çур аки вĕçлесен кĕрхи ĕç пирки шухăшламалла, унпа танах хĕле хатĕрленмелле. Халĕ вара шăпах çак вăхăт ĕнтĕ: выльăх-чĕрлĕх йышне сыхламалла тата ӳстермелле, кондициллĕ вăрлăх ытларах хатĕрлемелле тата ытти те.

Хамăр пурнăçланă ĕçе пысăка хурса хаклани лайăх, енчен те çакă хăнасен шухăш-кăмăлĕнчен курăнать пулсан вара самай сăваплă. Районти çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансене саламлакан хăнасем йышлăн пулчĕç. Чăваш Республика Правительстви тата Республика Пуçлăхĕ ячĕсемпе Чăваш Республикин чрезвычайлă лару-тăру тата гражданла оборона патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров саламларĕ тата ĕçре палăрнисене чысларĕ.




– Муркашсем ӳсĕмлĕ ĕçлесе пыни чылай ĕç-хĕлтен курăнать. Сире республика шайĕнче те тĕслĕхе илеççĕ, эсир татах та ӳсĕмлĕрех тимлессе шанаççĕ, – терĕ вăл.

Салам сăмахĕсем кунта йышлă пулчĕç. Çавăн пекех юрă-кĕвĕ вĕççĕр-хĕрсĕр юхрĕ. Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем, хушма хуçалăх тытакансем, ыттисем тутлă ĕçме-çимепе сăйларĕç. Çапла вара кашнинех уяв тулли кăмăл парнелерĕ. Шкул ачисен ал ĕçĕсемпе паллашма май килчĕ. Ял тăрăхĕсем вара уйрăм илемсем ăсталанă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**






**Сăн ӳкерчĕксенче: механизаторсем хушшинче 9 уйăх ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе Ильич яч. хис. хуçалăхри Л. Макаров районта иккĕмĕш вырăна тухрĕ; Г. Шарапов тĕп инженера ырламалла, техникăна управа лартассипе «Путь Ильича» агрофирма палăрчĕ; вĕсем – халăх йăли-йĕркине тăсакансем; И. Никитин фермер туянакан кăмăлне тивĕçтерчĕ.**

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă аппана – Пăсăрман ялĕнче пурăнакан **Валентина Ильинична СОРОКИНĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чунтан саламлатпăр.

Тавах, аппаçăм, эс пурришĕн, кил чысĕпе çемье ăшши пулнишĕн. Мĕн кирли йăлт пултăр сан: иксĕлми вăй-хал, хастарлăх, çирĕп сывлăх, вашаватлăх, çемьере ялан татулăх, пунăçу сан пултăр тулăх. Çиçтĕр сăн-питре телей, савăк пултăр юбилей.

**Саламлаканĕсем: икĕ йăмăкĕ, икĕ шăллĕ тата вĕсен çемйисем.**

Апчар ялĕнче пурăнакан **Галина Петровна ВОЛКОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Ачусен, мăнукусен хаваслă сассине итлесе, ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Турри сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕ, икĕ мăнукĕ, виçĕ пиччĕшĕпе икĕ шăллĕн çемйисем.**



Пирĕн юратнă çыннăмăр, хисеплĕ аннемĕр, тăванăмăр – Пăсăрман ялĕнче пурăнакан **Валентина Ильинична СОРОКИНА** çак кунсенче 50 çул тултарать. Çавна май эпир ăна ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри вăй-хăват патăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**



Чи хаклă çыннăмăра, мăшăра, юратнă та хисеплĕ аннене, тăванăмăра – Ятман ялĕнче пурăнакан, фельдшер пунктĕнче ĕçлекен **Валентина Петровна ЛЕБЕДЕВĂНА** 45 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн – пысăк телей, савăнăç.

Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма татах хăват парать.
Ялан пул эс пирĕнпе пĕрле
Йышра, тулли кĕрекере.

**Саламласа: мăшăрĕ, 3 ывăлĕ, кинĕ, 2 хĕрĕ, тăванĕсем.**

## Аукцион

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ АУКЦИОНА НА ПРАВО ЗАКЛЮЧЕНИЯ ДОГОВОРОВ КУПЛИ-ПРОДАЖИ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее – аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 01.11.2013 г. № 1179. Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, Моргаушский район, с.Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс 8 (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71.

Характеристика объектов купли-продажи:

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:060401:1142, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, ул.Советская, для строительства и обслуживания бани, площадью 68 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 50 050 (пятьдесят тысяч пятьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10 010 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2 502 руб. 50 коп.).

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:110101:234, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д.Тереси, для строительства и обслуживания магазина, площадью 228 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 68 000 (шестьдесят восемь тысяч) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (13600 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (3 400 руб. 00 коп.).

**Лот №3** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:091101:106, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д.Ивановка, ул.Лесная, для строительства и обслуживания магазина, площадью 74 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 90 000 (девяносто тысяч) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (18000 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (4 500 руб. 00 коп.).

**Лот №4** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:260102:188, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д.Изедеркино, ул.30 лет Победы, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1396 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 30 195 (тридцать тысяч сто девяносто пять) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (6 039 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (1 509 руб. 75 коп.).

**Лот №5** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:140105:228, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д.Хорной, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 37 240 (тридцать семь тысяч двести сорок) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (7 448 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (1 862 руб. 00 коп.).

**Лот №6** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:100301:130, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Оринınское сельское поселение, д.Лапкасы, ул.Мира, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 901 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 66 700 (шестьдесят шесть тысяч семьсот) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (13340 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (3 335 руб. 00 коп.).

Информация о проведении аукциона: Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете №312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении № 8613 ОАО Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

4. Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

5. Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах.

Сроки приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 13 ноября 2013 года по 13 декабря 2013 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе. С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора купли-продажи земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб.№312.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании Комиссии – 16 декабря 2013 года в 16.00 часов по адресу организатора аукциона. Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района Чувашской Республики.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка. Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится 17 декабря 2013 года по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, 3 этаж, каб. 312. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1-10.00, Лот №2 – 10.20, Лот №3- 10.40, Лот №4 – 11.00, Лот №5- 11.20, Лот №6 – 11.40.

Ĕç паракансем валли

# Ыйтакана справка парасах пулать

Раççей Федерацийĕн Социаллă страховани фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ çавăн пирки аса илтерет. 2013 çултанпа вăйра тăракан правилăсемпе килĕшӳллĕн хĕрарăма çие юлнă май тата ача çуртсан пособи, ачана çулталăк çурăна çитиччен уйăхсерен пособи тӳленĕ чухне уйăхри вăтам ĕç укçи виçине çав тапхăрчченхи календарлă икĕ çулхи пĕтĕм ĕç укçине çак вăхăтри календарлă кунсен шучĕ çине пайласа палăртаççĕ. Вăхăтлăх ĕçлеймен кунсем, çие юлнипе тата ача çуратнипе, ачана пăхса пурăнма илнĕ отпуск кунĕсем, ĕç укçине пĕтĕмпех тата унăн пĕр пайне сыхласа хăварса ĕçрен хăтарнă тапхăр кунта кĕмеççĕ. Çакна РФ законодательствипе пăхса хунă. Тепĕр майлă каласан Раççей Федерациĕн Социаллă страховани фондне страховани взносĕсем тӳлемен тапхăра шута илмеççĕ.

Шута илмен çав тапхăрсене справкăра кăтартас пулать. Ăна Раççей Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин 2013 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнчи 182н № хушăвĕпе çирĕплетнĕ. Асăннă справкăна страхователсем страхланă çынна ĕçлеме пăрахнă кун е ĕçлеме пăрахнă хыççăн справка илме заявлени çырса парсан виçĕ кун хушшинче пама тивĕç.

Справкăра ĕçлеме пăрахнă е справка илме ыйтса заявлени çырса панă çулталăк умĕнхи икĕ çулталăк хушшинчи ĕç укçи суммине, ытти тӳлевсене тата награда шучĕпе тӳленисене, çавăн пекех уншăн страховани взносĕсем хывнă пулсан ĕçлеме пăрахнă тулли мар çулталăкри тӳлевсене, Социаллă страховани фончĕ çине страховани взносĕсем куçарман тапхăра кăтартас пулать.

Кунсăр пуçне Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 62-мĕш статйипе килĕшӳллĕн ĕçлекен çын заявлени çырса парать пулсан предприяти е учреждени ăна виçĕ кун хушшинче ĕç-хĕлпе çыхăннă документсен копийĕсене (ĕçе илнин, урăх ĕçе куçарнин, ĕçрен хăтарнин хушăвĕ, ĕç кĕнекинчен çырса илни, ĕç укçи, обязательнăй пенси страхованийĕ çине тӳленĕ страховани взносĕсем, асăннă ĕç паракан патĕнче ĕçленĕ тапхăр пирки т. ыт. те панă справкăсем) пама тивĕç.

Çапла вара Раççей Федерацийĕн вăйра тăракан законодательствипе килĕшӳллĕн ĕç паракан ĕçлекен çынна асăннă документа пама тивĕç, страхланă çыннăн вара ăна илме саккунлă право пур.

**РФ Социаллă страховани фончĕн Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕн пресс-службi.**

Йывăр хуйхăна пирĕнпе пайланăшăн

# Тав тăватпăр

Эпир хамăрăн юратнă ывăлăма, тăванăма Сергей Геннадьевич Никитина пытарма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле çак хуйхăна пайланăшăн «Вязов» ИП организацине, тăвансене, пускилсене, унăн юлташĕсене, Москакасси ялĕнчи çынсене, Токшикри ял-йыша питĕ пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Никитинсен, Кулаковсен çемйисем.**

Ваçкасси ялĕнче пурăннă Нина Николаевна Ивановăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйхăна пирĕнпе пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Ывăлĕсемпе хĕрĕсен çемйисем.**

Шарпаш ялĕнче çуралса ӳснĕ пирĕн çывăх çыннăмăр, саппасри гварди подполковникĕ Николай Андрианович Никифоров пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ. Ăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле çак хуйхăна пайланăшăн тăвансене, хурăнташсене, тусюлташĕсене, пускилсене, ял-йыша, Чапаев яч. хис. хуçалăха пысăк тав сăмахĕ калатпăр, вĕсене пурне те вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Никифоровсен çемйи.**

Пĕлтерӳсем. Объявления


Поступила новая продукция компании Виналайт на основе стволовых клеток растений для профилактики заболеваний и оздоровление организма. Ждем ежедневно с 8 до 17 час. по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2 (здание бани). Тел.: 8-905-027-24-26, 8-903-345-45-32.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 7-10.

Сдаю квартиру в центре с. Моргауши. Тел.: 8-917-670-73-98.

ЖАЛЮЗИ НА ОКНА ВСЕХ ВИДОВ от производителя. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00. 8-10.

КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ ГРАЖДАН
КапиталЛ
Поможем и приумножим!
www.kapital-21.ru
Выгодный вид сбережений 29%
от 10 000 до 700 000 руб., от 6 месяцев до 3 лет***
ПРИНИМАЕМ СБЕРЕЖЕНИЯ
ВЫДАЕМ ЗАЙМЫ ОТ 3,1% kpk_kapital@list.ru
КПКГ “КапитаЛ” удерживает налог на доходы физических лиц с начисленных процентов, в соответствии с Налоговым кодексом РФ
При досрочном расторжении договора процентная ставка рассчитывается по программе “До востребования”, 6% годовых.
*** Данный вид сбережений доступен каждому члену КПКГ “КапитаЛ”
с. Моргауши, ул. Мира, д.5а 8(927)990-93-10 8(83541)626-50
г. Чебоксары, пр. Московский, д. 14, 2 этаж 8(8352)222-830 10-10.
КПКГ "КапитаЛ" является членом саморегулируемой организации "Межрегиональный союз кредитных кооперативов".
КПКГ “КапитаЛ” только для членов кооператива, подробности по телефонам.

Немецкие качественные пластиковые окна. Замер, доставка – бесплатно. СКИДКИ. Тел.: 8-927-844-78-11. 4-5.

Строительной организации требуются маляры, плиточники, гипсокартонщики. З/п высокая, проезд и проживание в съемной квартире за счет организации. Тел.: 8-961-345-33-74. 7-8.

Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 10-10.

МАТРАСЫ ВСЕХ ВИДОВ. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00. 8-10.

Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 6-10.

МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ от производителя. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00. 8-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92. 20-33.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.

“ВИКТОРИЯ-ОКНА”
ЗАМЕР, ДОСТАВКА БЕСПЛАТНО 8-10.
СРОК ИЗГОТОВЛЕНИЯ 3-5 ДНЕЙ
АКЦИЯ БАНКА: весь месяц октябрь кредит на окна без процентов.
ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
ГАРАНТИЯ КРЕДИТ РАССРОЧКА
СКИДКА до 35%
7-е окно в ПОДАРОК
REHAU Unlimited Polymer Solutions brusbox KBE ARTEC ОКОННЫЕ СИСТЕМЫ
Производственный цех, с. Моргауши, ул. Гагарина, 16 а (здание котельной).
Тел.: 62-1-20,8-917-662-71-64, 8-937-955-33-00.

СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 10-10.


## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:200203:147, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5678 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

* * *


Требуется КРЕДИТНЫЙ СПЕЦИАЛИСТ в с. Моргауши, знание ПК, орг. техники, можно без опыта, ЗП от 15000 руб. Тел.: 8-927-667-30-21, 8(8352)222-830. 2-2.

* * *

Требуется водитель (без вредных привычек) с категорией «С» на молоковоз. Зарплата своевременная, от 12000 руб. Тел.: 8-927-847-11-22. 1-2.

* * *

Январьте тăваттăмĕш пăруламалли хура ĕне сутатпăр. Ятман ялĕ. Тел.: 68-7-24, 8-937-951-43-39.

* * *

Продаю УАЗ марки 330364, инжектор, тент, двигатель 421, 2008 года выпуска. Цвет белая ночь. Цена договорная. Тел.: 8-905-029-53-54.

* * *

Качакан 7 уйăхри путеккисене сутатăп. Тел.: 8-919-679-20-58.

* * *

Иккĕмĕш пăруламалли хĕрлĕпе шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-937-372-74-83.

* * *

Февраль уйăхĕнче иккĕмĕш пăруламалли хурапа шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Кӳстерек ялĕ. Тел.: 8-937-373-47-70.

* * *

Срочно требуются официантки для работы в кафе «Шуçăм». Тел.: 69-5-46. 1-2.

* * *

Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши. Тел.: 8-962-601-19-22.

* * *

Реализуем за наличный и безналичный расчет ж/б кольца с крышками, ж/б столбы, бревна 8 м. под сруб или под опор 0,4 кВ, автомашину ГАЗ-52 бортовая, элетрудер для ЭКД для фермеров (цены от производителя). Выполняем все виды электромонтажных и электроизмерительных работ. ООО «Энергосервис М». Тел.: 8-905-342-98-11.


* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Дипломатова Елена Матвеевна, Дипловматова Римма Геннадьевна, Дипломатов Эдуард Анатольевич, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Чебелькасы, ул. Центральная, д. 3.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата № 21-11-28 от 08.02.2011 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Волга», земельный участок расположен западнее д. Чебелькасы.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37.

Администрация Моргаушского района и главы сельских поселений Моргаушского района выражают глубокое соболезнование родным и близким Лаптева А.В., главы Большесундырского сельского поселения, по поводу кончины отца

**ЛАПТЕВА Владимира Леонидовича.**

Коллектив администрации Большесундырского сельского поселения выражает глубокое соболезнование главе Большесундырского сельского поселения Лаптеву Анатолию Владимировичу в связи с тяжелой утратой – смертью отца

**ЛАПТЕВА Владимира Леонидовича.**

Прогноз погоды

| | среда 13 ноября | | | | четверг 14 ноября | | | | пятница 15 ноября | | | | суббота 16 ноября | | | | воскресенье 17 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -1 | 0 | +3 | +4 | +4 | +4 | +5 | +5 | +3 | +2 | +3 | +2 | 0 | -2 | 0 | -1 | 0 | +2 | +3 | +3 |
| Давление мм | 756 | 755 | 752 | 750 | 748 | 745 | 743 | 743 | 745 | 747 | 749 | 750 | 752 | 753 | 754 | 753 | 750 | 749 | 748 | 749 |
| Влажность % | 90 | 93 | 75 | 85 | 89 | 95 | 89 | 89 | 88 | 88 | 78 | 79 | 75 | 78 | 65 | 76 | 90 | 89 | 79 | 80 |
| Ветер м/сек | 3 | 1 | 4 | 4 | 4 | 1 | 2 | 2 | 4 | 5 | 3 | 5 | 4 | 4 | 3 | 4 | 6 | 5 | 5 | 6 |
| | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-В | В | С | С | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | З | З | З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 08:26 | 16:48 | | | 08:28 | 16:46 | | | 08:30 | 16:44 | | | 08:32 | 16:43 | | | 08:34 | 16:41 | |
| Луна восход / заход | | 15:05 | 03:07 | | | 15:26 | 04:24 | | | 15:49 | 05:39 | | | 16:15 | 06:51 | | | 16:46 | 08:01 | |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышănмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 12.11.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4807.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.